Светлана Асамат

Чăваш ташши, юрри – кĕтрет.
«Линка-линка» янăрасан
Чупса тухса ташлас килет.
Алран кайми юрă юхсан
Мăнаçланса юрлас килет
Чăваш çĕвви-тĕрри – кĕтрет.
Шурă пиртен, аркăласа
Капăр кĕпе тăхăнас килет,
Тĕрлĕ тĕспе сĕвемлесе
Тĕрĕлесе тăхнас килет.
Енчĕк, масмак, сурпан çыхса
Ама, тевет, алка çакса
Чиперрĕн курăнас килет.
Чăваш кил-çурчĕ те кĕтрет.
Кăкшăм, çурхат çӳпçе, чӳлмек,
Пештĕр арча, чăм илĕртет.
Сăра тултарнă алтăрпа
Чăваш хăна кĕтсе илет,
Эрешлĕ тĕпеле лартса
Апачĕ-çимĕçне сĕнет.
Тĕлĕнтерет кун-çул утти,
Ăсталăхпа илем çути.

*Асамат, С. «Чăваш-ташши, юрри – кĕтрет…» : [сăвă] / С. Асамат // Шаркова-Изратова, Т. Три солнца : каталог-альбом / Т. Шаркова-Изратова. – Чебоксары, 2002. – С. 36.*